25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАЙ
13
ЮНКУН
109(6044) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çар ĕçне тимлĕн вĕренер

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçăн хирĕнче нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсене аркатса пырать, тăшманăсене хĕвеланăçнелле хăвалать. Отечественнăй аслă вăрçă çĕнĕ тапхăра — совет çĕрĕсене гитлерла ирсĕрсенчен тасатас тапхăра кĕчĕ.

Вăрçăра противник пысăк çухатусем тусан, унăн резервĕсем пĕтсе пыраççĕ. Çав вăхăтрах пирĕн çĕршывăн вăйхăвачĕ кашни кунах ÿссе пырать. Хаяр вăрçăн вут-хĕмĕнче пирĕн боецсемпе командирсем, летчиксемпе танкистсем, артиллеристсемпе минометчиксем, пехотинецсемпе кавалеристсем, снайперсем-истребительсем тата моряксем çар ĕçне вĕренчĕç, халĕ те вĕсем хăйсене паннă хĕçпăшалсемпе усă курса тăшмана вăйлăн çапса аркатма çине тăрсах вĕренеççĕ. Хĕрлĕ Çар организациллĕрех те вăйлăрах пулса тăчĕ.

Çавăнпа пĕрлех пирĕн Хĕрлĕ Çар яланах çĕнĕ вăй илсе тăрать. Вăрçă ĕçне тытăра вĕренсе хатĕрленнĕ резервсем Действующи армие хутшăнаççĕ. Всевобучăн малтанхи черетĕнче çар ĕçне вĕреннисем чылайĕшĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче.

Парти, совет организацийĕсем, çарĕç комиссариачĕсемпе пĕрле, совет гражданĕсем вăрçă ĕçне вĕренессине организацилеççĕ. Совет çыннисем винтовкăпа, пулеметпа, минометпа, гранатăпа тата ытти хĕçпăшалсемпе тăшмана хирĕç çапăçма тимлĕн вĕренеççĕ. 110 сехетлĕ программа тăрăх иккĕмĕш черетпе çар ĕçне вĕренекенсем занятисене тăрăшсах çÿрени, тĕрлĕ хĕçпăшалсене тĕплĕн вĕренме тăрăшни, вĕренÿре «отлично» тата «хорошо» паллăсем илекенсем йышлă пулни çавăн çинчен калать ĕнтĕ. Сăмахран, Куславкка комбинатĕнчи вĕренÿ пунктĕнче Кралечкин, Небайкин тата Московкин командирсен отделенийĕсем çар ĕçне тăрăшса вĕреннĕ; çав отделенисен боецĕсем программăна пурте отлично вĕренсе тухнă. Куславкка районĕнчи Карач ялĕнче снайперсем пулма вуншар çын вĕренет.

Куславкка районĕн центрĕнче партипе совет активĕнчен 24 çын 80 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне вĕренеççĕ. Кунта занятисене отечественнăй вăрçăра пулса нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç çапăçнă командирсем Чистиковпа Герасимов юлташсем ирттереççĕ. Вĕсем хăйсен боевой опычĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Унта вĕренекенсем çĕнĕ техникăпа, сăмахран, автомат-винтовкăпа, минометпа, пулемет-пистолетпа тата ытти хĕçпăшалсемпе те хытă интересленеççĕ.

Рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем çар ĕçне вĕренесшĕн. Рабочисен е колхозниксен пухăвĕсенче винтовкăна, пулемета вĕренме кружок тăвас ыйтăва час-часах çĕклеççĕ, решенисем те йышăнаççĕ. Анчах хăшпĕр чухне çав решенисене пурнăçа кĕртес тесе практикăллă ĕçе организацилекенсем пулмаççĕ. Час-часах осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсем çавăн пек решенисене пурнăçа кĕртес ĕçе йĕркелесе яма манаççĕ. Кун пек ан пултăр тесен, партин пуçламĕш организацийĕсен çар ĕçне вĕренессине массăллă оборона организацийĕсем мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕтĕшах тĕрĕслесе тăрас пулать. Асра тытас пулать: халĕхи вăхăтра, вăрçă вăхăтĕнче, халăха çар ĕçне вĕрентесси вăл—парти организацийĕсен тĕп вырăнта тăракан ĕçĕсенчен пĕри.

Алла хĕçпăшал тытма пултаракан гражданăсене çар ĕçне вĕрентессине всевобуч енĕпе обязательно йĕркепе туса пыраççĕ. Всевобучăн кашни пунктĕнче çирĕп йĕркелĕх пулни кирлĕ. Занятисене пĕр сиктермесĕр тата вăхăтра çÿремелле, хĕçпăшалсене тата вĕсемпе усă курма вĕренсе çитмелле. Çавăнпа пĕрлех совет кашни гражданинĕ пĕр-пĕр çар специальноçне вĕренессине организацилемелле. Ку тĕлĕшпе вара осоавиахимăн, РОКК-ăн пуçламĕш организацийĕсем тимлĕн ĕçлесе пыни кирлĕ.

Çар ĕçĕн минимумне пĕлни çитмест. Кашни гражданинăн çар ĕçне малаллах вĕренсе пырас пулать, çар ĕçĕн çĕнĕ техникине тĕплĕн вĕренсе çитсе, унпа тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте усă курма лайăх пĕлмелле.

Химиллĕ тапăнуран тата сывлăшран тапăннинчен хÿтĕленес ĕçе, санитарипе çыхăну ĕçне вĕренсе ымалла.

Нимĕçсен фашистла çарне аркатса тăкма тата нимĕç оккупанчĕсене, вĕсем тыткăна парăнмаççĕ пулсан, юлашки çын юлмиччен пĕтерсе тăкма пирĕн Хĕрлĕ Çарăн мĕн кирли пурте пур. «Тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пирĕн пĕр япала кăна—тăван çĕршыв Хĕрлĕ Çара парса тăракан паха техникăпа туллин усă курма пĕлни кăна çитмест», терĕ Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнчи приказра.

Совет гражданĕсен пурин те, хамăрăн çулпуçăн кăтартăвне асра тытса, ăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемелле. Çар ĕçĕн пĕр-пĕр специальноçне тĕплĕн вĕренсе çитесси — совет патриочĕн чи хисеплĕ ĕçĕсенчен пĕри пулса тăнине яланах асра тытас пулать.

Отечественнăй вăрçа хутшăннă хĕрарăмсен митингĕ

Майăн 10-мĕшĕнче Мускавра Союзсен çуртĕн Колоннăй залĕнче отечественнăй вăрçа хутшăннă хĕрарăмсен митингĕ пулнă. Митинга Совет Союзĕн Геройĕ **Гризодубова** юлташ уçнă. Гризодубова юлташ фронтра çапăçакан хĕрарăмсемпе хĕрсене, çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлине парса тăрас тĕлĕшпе паттăррăн ĕçлекен хĕрарăмсене тата тăшмана хирĕç кĕрешекен Англи хĕрарăмĕсене, ирĕклĕхшĕн кĕрешекен француз хĕрарăмĕсене салам каланă.

Унтан Ленинградри хĕрарăмсен представителĕ, Сталин юлташ ячĕпе тăракан заводăн стахановки **Матвеева** юлташ, Мускав облаçĕнчи колхозница, партизанла кĕрешĕве хутшăнса çапăçнă **Прохорова** юлташ, геройла Севастополь хĕрарăмĕ учительница **Федоринчик**, Мускав облаçĕнчи Ленински районри колхоз председателĕ **Юнина** юлташ, бронепоезд машинисчĕн помощникĕ **Козьменкова** юлташ, ВЦСПС секретарĕ **Николаева** юлташ, Уралмашзаводăн стахановки **Подберезина** юлташ, Балти тинĕсĕн Хĕрлĕ ялавлă флочĕн çар врачĕ **Геращенко** юлташ тухса каланă.

Совет Союз Геройĕн Зоя Космодемьянскаян амăшĕ **Л. Т. Космодемьянская** трибуна çине тухсан, митингри хĕрарăмсем нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ.

Митингра скульптор-орденоносец **В. Мухина**, академик **Лина Штерн**, Азербайджанри нефть институчĕн научнăй сотрудникĕ **Агаларова**, писательница **Вера Инбер** тата Узбек ССРĕн Андижан облаçĕнчи Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозници **Каримова** юлташсем тухса каланă.

Митинг президиумĕ Великобританипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи тĕрлĕ организацисенчен саламсем илнĕ. Саламлă çырусене вуласа панине митингра пулнисем нумайччен алă çупса кĕтсе илнĕ.

Çавтери пысăк хавхаланупа Сталин юлташ патне салам яма йышăннă. Митингра пулнисем пурте Сталин юлташа хисеплесе тăвăллăн алă çупнă.

Митинг пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене чĕнсе калама тата Лондон хĕрарăмĕсем патне салам яма йышăннă. (ТАСС).

Хĕрарăмсем—отечественнăй вăрçă участницисем пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене чĕнсе калани

АМĂШĔСЕМ, АРĂМСЕМ, ХĔРУПРАÇСЕМ, АППАСЕМПЕ ЙĂМĂКСЕМ!

Нимĕçсен юнлă фашизмне хирĕç татăклă çапăçусем пуçланаççĕ. Тискер Адольф Гитлерпа унăн ушкăнĕ пĕтес вăхăт çывăхра. Гитлерла вăрă-хурахăн сăнпичĕ çинчен маскăна сирсе пăрахнă. Вĕсем — çынвĕлеренсем, вăрă-хурахсем, авантюристсем, ирсĕрсем, политикăллă ултавçăсем. Вĕсем пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи хĕрарăмсемпе ача-пăчасен чи усал тăшманĕсем. Вĕсем — çĕр çинчи мирлĕ пурнăçăн тăшманĕсем.

Нимĕçсен çарĕ тунă преступленисен списокĕ вĕçĕ-хĕррисĕр вăрăм, вăл тунă ĕçсем пек тискер ĕçсем халиччен тĕнчере урăх пулман. Белоруссин, Украинăн, Крымăн хулисемпе ялĕсенче нимĕç оккупанчĕсем хĕрарăмсенчен тĕнче халиччен курман пек тискеррĕн, ирсĕррĕн мăшкăлласçĕ. Чурасен базарне Германие нумай пиншер хĕрарăмсемпе хĕрсене ирĕксĕр хăваласа каяççĕ. Оккупациленĕ çĕр çинче нимĕç фашизмĕ çĕнĕрен крепостла йĕркесем туса хурать. Совет Союзĕнчи ирĕклĕ хĕрарăмсенчен чурасем туса хума хапсăнать.

Нимĕç ирсĕрĕсем пирĕн ачасене асаплантараççĕ, пĕчĕк ачасене пере-пере пăрахаççĕ, тискеррĕн асаплантарса вĕлереççĕ. Çак тискер ĕçсене вĕсем паян Киев таврашĕнче, Минскра, Полтавăра тăваççĕ. Çав тискер ĕçсене вĕсем, эпир чарса лартмасан, ыран Лондонпа Нью-Йоркра, Стокгольмпа Монтевидеора тума пăхĕç.

Хĕрарăмсем! Совет халăхĕ фашистла Германие хирĕç вунă уйăх хушши туса пынă отечественнăй аслă вăрçă Гитлерăн тарçисем нимĕç çарне çĕнтерекенни никам та çук тесе шутласа кăларнă юмаха сирсе ячĕ. Хăйсем пĕтессине туйса, гитлеровецсем урса кайсах хирĕç тăраççĕ. Вĕсем кирек мĕнле усал ĕç те, кирек мĕнле ирсĕр ĕç те тума хатĕр. Анчах та çакă вăл вĕсен вилес умĕнхи тытамакĕ. Германин çынсен резервĕсем пĕтсе пыраççĕ. Вĕсен нефтьпе чĕртавар запасĕсем вĕçне çитнĕ. Нимĕç халăхĕ вăрçа пула юн тăкса халран кайнă. Гитлерла тарçăсен ирсĕр шайккисем халлĕхе сĕмсĕррĕн каппаяççĕха, малалла та каппайма пăхĕç, анчах нимĕç халăхĕ хăйне Гитлер улталанине тавçăрса иле пуçларĕ. Нимĕç войскисен речĕсем ишĕлме пуçларĕç, нимĕçсен тылĕ шикленсе хуйăха ÿкнĕ.

Совет Союзĕ вара, унăн Хĕрлĕ Çарĕпе тылĕ вăрçăн çав уйăхĕсем хушшинче çирĕпрех те вăйлăрах, организованнăрах та опытлăрах пулса тăчĕç. Çынсен резервĕсем пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр нумай. Хĕçпăшал та пирĕн халĕ ытларах, фашистла ирсĕрсене курайманни вара çав хĕçпăшала татах та ытларах çирĕплетрĕ! Эпир — çĕнтерÿ çулĕ çинче!

Нимĕç фашизмне хирĕç тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем пĕрлешрĕç. Вĕсем Совет Союзĕ çине пысăк шанчăкпа пăхаççĕ. Ирĕклĕхе юратакан халăхсен пĕрремĕш колоннинче Великобританипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем пек хăватлă çĕршывсем пыраççĕ.

Сакăр уйăх каярах — 1941 çулти сентябрĕн 7-мĕшĕнче фашизма хирĕçле хăйсен пĕрремĕш митингĕнче совет хĕрарăмĕсем пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене фашизма хирĕçле пĕрлĕхлĕ фронта пĕтĕçме чĕнчĕç.

Миллионшар арçынсен — пурнăçне, ачасен — ачалăхне, çамрăксен — пурнăç хавaслăхне, хĕрарăмсен — çемьисемпе мирлĕ ĕçне, ватă çынсен — канăçне туртса илнĕ нимĕç фашизмне çапса аркатма хамăрăн мĕнпур вăя пама тупа турăмăр эпир ун чухне.

Совет хĕрарăмĕсем тупа туни сăмах пулса юлмарĕ. Çак уйăхсем хушшинче эпир хĕрарăмсем мĕнле пысăк вăй пулса тăнине татах та тепĕр хут ăнланса илтĕмĕр, гитлеровецсем вара çакна хăйсен тирĕсем çинче туйса илчĕç.

Ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçă вырăс халăхĕн чăн-чăн героинисене, хĕрарăмсемпе хĕр-богатырьсене çуратрĕ. Зоя Космодемьянская, Лиза Чайкина, Антонина Петрова партизанкăсем, тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн тăшманăн тылĕнче кĕрешсе, хăйсен паттăр ĕçĕсемпе хăйсене кăна мар, çавăн пекех мĕнпур совет хĕрарăмĕсене те вилĕмсĕр турĕç.

Ленинградпа Севастополь хĕрарăмĕсем — патриотизмпа çирĕплĕхĕн, хастарлăхпа хăюлăхăн примерĕсем пулса тăраççĕ. Вăхăт çитĕ, летописецсем вĕсен геройла аслă ĕçĕсем çинчен тĕплĕн çырса хăварĕç.

Совет Союзĕнчи миллионшар хĕрарăмсем хăйсен паттăрлăхне, чăтăмлăхĕпе çирĕплĕхне, хăйсем вилĕмрен хăраманнине тата яланах çĕнтерме хатĕр тăнине кăтартса пачĕç. Миллионшар совет хĕрарăмĕсем хамăрăн тăван хуласемпе ялсене, хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр, арçынсемпе юнашар тăрса, нимĕç захватчикĕсен сĕмсĕр йыткĕтĕвĕсенчен хÿтĕленĕ, хÿтĕлеççĕ тата малалла та хÿтĕлесе пырĕç. Совет Союзĕнчи мĕнпур хĕрарăмсем халĕ ĕнтĕ боецсем пулса тăчĕç, урса кайнă фашизма хирĕç пурте çĕкленчĕç.

Фашистсен тискер йыткĕтĕвĕсем Мускав, Ленинград, Севастополь патнелле талпăнса пынă чухне кам баррикадăсем тунă? Хĕрарăмсем! Тăшманăн танкĕсене чарса лартма кам шăтăк чавнă? Хĕрарăмсем! Фашистсен çăханĕсем вĕçсе пырса тапăннă чухне урамсенче, çуртсен çийĕсем çинче кам вахтăра тăрать? Хĕрарăмсем! Ленинград хĕрĕ Евгения Журавлева тăшман пырса тапăннă сехетсенче çулăм ăшнех кĕрсе кайса, хăйĕн пиççе кайнă аллисемпе хăй пачах та палламан вуншар çынсене çулăмран çĕкле-çĕкле тухнă. Севастополь хĕрĕ — штамповщица Анастасия Чуас бомбăсем çуралнă вăхăтра станок умĕнче тăрса ĕçленĕ. Пĕррехинче бомбардировка вăхăтĕнче Чуас хăйĕн аллине çухатнă. Анчах кăшт юсанса çитсенех, вăл çĕнĕрен станок умне тăнă, халĕ кашни сменăра виççĕшер, пилĕкшер норма тултарса пырать. Севастополь хулине хÿтĕленĕ çĕрте кĕрешекен Нина Онилова, пулеметран персе, 500 фашиста ытла пĕтерсе тăкнă. Аня Панченко çапăçу хирĕнчен аманнă 200 боеца илсе тухнă. Хĕр—паровозăн машинисчĕ Соболева, аманнă пулсан та, хăйĕн постне пăрахса кайман: «Эпĕ ăçта тăратăп, çавăнта манăн фронт», тет вăл.

Çакăн пек героиньăсем пирĕн пиншерĕн хисепленеççĕ!

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем, хаклă тусăмăрсем! Фронт — пăшал пенĕ сасăсем кĕрленĕ çĕрте кăна мар. Пирĕн совет хĕрарăмĕсем хăйсене тылра та чăн-чăн боецсем пекех кăтартрĕç.

Паян эпир кирек мĕнле професси те алла илме пултаратпăр, — терĕç совет хĕрарăмĕсем. Вĕсем ĕçре арçынсем вырăнне — шахтерсем, металлургсем, вăрман касакансем, трактористсем, колхоз председателĕсем вырăнне тăрса ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Уйхирсенче, заводсенче, паровозсем çинче, нефть вышкисем патĕнче, шахтăсенче, научнăй лабораторисенче, юханшывсем тăрăх çÿрекен суднăсем çинче, ылттăн кăларнă çĕрте,—пур çĕрте те пирĕн хĕрарăмсем арçынсем вырăнне тăрса фронтри пек ĕçлеççĕ. Кузбасра пĕр пин хĕрарăм шахтăсене аннă. Князева геолог нефть кăлармалли çĕнĕ вырăнсем тĕпчесе тупать. Академик Лина Штерн нерв чирĕсемпе кĕрешет, вăйсăрланнă чĕресене ĕçлекен тăвать.

Паян нормăсене тултарса пыни кăна çителĕксĕр, — терĕç совет хĕрарăмĕсем. — Фронт кĕтет. Паян пирĕн сменăра виçĕ-тăватă норма тултармалла.

Хĕрарăмсен отрячĕсем — производствăра çĕнĕлле ĕç меслечĕсем пуçарса яракансем, хăйсен рационализаторла хăюллă пуçарăвĕсене пула, сменăра 7—8-шар е тата вуншар норма та тултарса ĕçлеççĕ. Уралри электрообмотчица Раиса Кыштымова сменăра 30-шар норма тултаракан пулчĕ. Шуминскри хĕр-трактористка Эно Сарыева куллен кун виççĕшер норма тултарса пырать.

Вырăс, украин, армян, грузин, белорусс, эстонец, таджик хĕрарăмĕсем, Совет Союзĕнчи мĕнпур национальноçсен хĕрарăмĕсем хăйсен боевой вырăнĕсенче тăраççĕ. Пирĕн нумай миллионлă халăх тăшмана хирĕç нихăçанхи пек мар пĕрлĕхлĕ тăрать.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çара çакăн пек приказ пачĕ — «1942 çула нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăлармалли çулталăк туса хумалла!».

Хĕрлĕ Çар умне лартнă çакă аслă та пархатарлă задача мĕнпур совет халăхне ĕçпе çапăçура паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантарса çĕклерĕ.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем! Эпир, совет хĕрарăмĕсем, Мускавра фашизма хирĕçле митинга пухăнса, çапла калатпăр: пирĕн аслă çулпуç Майăн 1-мĕшĕнче панă приказа эпир Хĕрлĕ Çарăн боевой приказĕ кăна мар, Совет Союзĕнчи хĕрарăмсен нумай миллионлă çарĕн приказĕ те тесе шутлатпăр.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем умĕнче эпир çапла калатпăр: Хĕрлĕ Çарпа тата Тинĕс-Çар Флочĕпе пĕрле эпир те — мĕнпур национальноçсен, мĕнпур профессире ĕçлекен, пур тĕрлĕ çулти совет хĕрарăмĕсем те тăшмана хирĕç наступлени каятпăр. Пирĕнтен пĕрисем тÿрремĕнех çапăçăва хутшăнĕç, вĕсен хĕрарăм аллисем çапăçура чĕтремĕç. Теприсем, хăйсен станокĕсем умĕнче тата уйхирсенче ĕçлесе, тăшмана хирĕç наступлени туса пырĕç. Вăхăтлăха фашистсен пусмăрĕ айне лекнисем ăçта май килнĕ унта, мĕнпе май килнĕ çавăнпа, кунне-çĕрне пăхмасăр, гитлерла мерзавецсене пĕтерĕç.

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем — питĕ пысăк вăй пулса тăраççĕ. Мĕнпур çĕр чăмăрĕ çинчи хĕрарăмсем вара мĕн пек улăпла аслă вăй пулса тăма пултарĕç! Хĕрарăмăн паттăрлăхĕ, вăл хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр ĕçлени, вăрçă кÿнĕ йывăрлăхсемпе хуйхăсем умĕнче вăл пуçне усма пĕлменни, — çакă вăл тăшмана вĕлермеллех пырса çапакан хĕçпăшал пулса тăмасть-и вара! Гитлерла йытă кĕтĕвĕ мĕнпур тĕнчери ача амăшĕсен хаяр тарăхăвĕнчен хăрамасть-и вара!

Англири, Америкăри, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсем! 1942 çулта пĕрлешнĕ вăйсемпе хăмăр чумана пĕтерсе тăкас тесен, халĕ эпир пĕрле тăрса кĕрешни нихăçанхинчен те ытларах кирлĕ. Юншăн хапсăнакан гитлеризма хирĕç татăклă çапăçу пынă вăхăтра эпир сире хамăрăн рете тăма чĕнетпĕр. Çакна асра тытăр: пирĕн çапăçу хирĕсенче сирĕн пуласлăх пирки те ĕç татăлать.

Кам мирлĕ пурнăçпа пурăнасшăн — çавă фашизма хирĕç пыракан вăрçа пулăштăр. Кам хăйĕн ачисене телейлĕ тăвасшăн — çавă ачасене вĕлерекенсене пĕтерсе пытăр.

Самолетсемпе танксем, тупăсем ытларах туса кăларăр! Пĕтĕм Европăна, пĕтĕм тĕнчене çĕтса яма хапсăнакан гитлерла тискер кайăкăн пуçĕ çине бомбăсемпе снарядсем ытларах тăкăр.

Германи фашисчĕсем оккупациленĕ çĕршывсенчи хĕрарăмсем! Аллăрсене винтовкăсемпе гранатăсем тытăр. Сирĕн тăван хуласемпе ялсем çинчен мăшкăл сăнчăрĕ сирĕлсе ывтăнас вăхăт инçе мар. Ирĕклĕхе тухмалли çав самант ыраналах çиттĕр тесен, паян эсир нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенчи партизанкăсем тăвакан ĕçех туса пырăр. Гитлерла ирсĕрсене кашни утăмрах сăтăрласа пырăр! Нимĕçсен склачĕсене, чугунçул йĕрĕсене сирпĕнтере-сирпĕнтере ярăр, çыхăнăва татăр, нимĕçсем хуçа пулса тăракан фабрикăсемпе заводсенчи ĕçе сиенлесе пырăр. Фашистсем вăрă-хурахланине хирĕç тăрăр. Гитлерăн çаратуçă çарне хăвăрăн ачăрсемпе упăшкăрсене, ывăлăрсене илсе кайма ан парăр.

Германири хĕрарăмсем! Германи пуçĕнче паян та вăрă-хурах Гитлерах юлсан, Германие ыран мĕн кĕтесси сире паллă мар-и вара? Гитлерпа Герингăн авантюристла шайкине сирпĕнтерсе антарассишĕн кĕрешĕр! Фронта çар эшелонĕсем ярассине чарса тăрăр, çар производствине хирĕç саботажсем тăвăр.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем! Гитлерла бандăна 1942 çулта пĕтĕмпех çапса аркатассишĕн — малалла! Кам çĕнтерÿ кĕтет — çавă çĕнтерÿ тума пулăштăр. Çĕнтерÿ хăй тĕллĕн килмест, ăна çапăçса илмелле!

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен фашизма хирĕçле пĕрлĕхлĕ фронтне татах та ытларах çирĕплетĕр!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 11-мĕшĕнче Керчь çурутравĕ çинче пирĕн войскăсем нимĕçсен наступлени тума тытăннă фашистла войскисене хирĕç вăйлăн кĕрешнĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

Майăн 10-мĕшĕнче нимĕçсен 38 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 10-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăçĕсем войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинăна яхăн, боеприпассем тиенĕ 10 лава ытла, 10 полевой тата зенитнăй орудие, 13 миномета, 2 прожектора пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 2 паровоза çĕмĕрнĕ, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 18 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрне хушшинче, майăн 3-мĕшĕпе 9-мĕшĕ хушшинче, нимĕçсен 171 самолетне пĕтернĕ. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 86 самолет пĕтнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем противника хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Нимĕçсем чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Пирĕн пĕр часть кăна тăшманăн 1300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата противникран 6 танк, 12 миномет, 10 пулемет, 24 автомат тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕç автоматчикĕсен роти пирĕн оборона рубежне атакăлама хăтланнă. Çапăçу хирĕнче вилнĕ 40 салтака ытла хăварса, гитлеровецсем хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă. Пирĕн боецсем станковăй пулемет, 2 автоматпа тата темиçе вуншар автомат тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Старши лейтенант Ларюшин ертсе пыракан разведчиксен группи противникăн тылне кĕрсе кайнă. Тăшманăн блиндажĕсем патне вăрттăн йăпшăнса пырса, боецсем вĕсем çине гранатăсем ывăтнă. Чĕрĕ юлнă нимĕçсем блиндажсенчен сике-сике тухнă, вĕсене пирĕн разведчиксем вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем пулемет тата пулемет лентисем хунă 15 ещĕк, стереотруба, 30 винтовка тытса илсе, хăйсен подразделенине пĕр çухатусăр таврăннă.

* * *

Нимĕçсен 211-мĕш пехотнăй дивизинчи 317-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Лоренс Бауманс çапла каласа панă: «Пирĕн 180 çынтан тăракан виççĕмĕш рота Францирен январь уйăхĕнче килчĕ. Пирĕн ротăна темиçе хутчен çынсем хушса пачĕç, анчах та виçĕ уйăх хушшинчи çапăçусем ротăна йăлтах пушатса, юнсăрлатса хăварчĕç. Ротăра начарланса çитнĕ, асап курса пĕтнĕ тата тăмсайланса кайнă çынсен пĕчĕк ушкăнĕ çеç тăрса юлчĕ. Çакăн пек ĕнтĕ манăн ротăн кĕске те хуйхăллă историйĕ. 1942 çулти мартран пуçласа ротăсенче ятарласа, «çапăçтармалли службăн фельдфебелĕ» ятлă должность туса хунă. Çапăçу вăхăтĕнче çав фельдфебель наступлени туса пыракан е хăйне хÿтĕлекен рота хыçĕнче тăрать, каялла чакма е тыткăна парăнма пăхакансене кашнине пулеметран пере-пере вĕлерет».

* * *

Ленинград облаçĕнчи Арефино ялĕнче, халь нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăскерĕнче, пурăнакан çынсем çапла каласа параççĕ: «Гитлеровецсем яла çĕмĕрсе кĕрсенех массăллăн çаратма тытăнчĕç: мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе, килти кайăк-кĕшĕке пусса пĕтерчĕç, колхозниксенчен продовольствипе тумтирсене туртса илчĕç. Гитлеровецсем 78 çулти старике Александр Васильевич Андреева хĕнесе пĕтерчĕç, унăн урине тăхăннă çăматтине хывса илчĕç те хăйне çарран икĕ километр юр тăрăх чуптарчĕç. Нимĕç бандичĕсем 53 çулти Прасковья Поповăна, унăн 18 çулти ывăлне Павла, 21 çулти хĕрне Надеждăна, 72 çулти Евдокимовăна тата ытти çынсене те асаплантарса пĕтерчĕç, унтан вĕлерчĕç. Ялтан каялла чакнă чухне гитлерла ирсĕрсем колхозниксен 23 килĕнчен 20 килне çунтарса ячĕç, шкула, ача яслине сирпĕнтерсе ячĕç колхозăн мĕнпур çуртйĕрĕсене çунтарса ячĕç».

Майăн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Майăн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

М. пунктшăн пынă çапăçусенче (Кăнтăр фрончĕ) пирĕн танкистсем тăшманăн 200 салтакне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен пĕр танкне, 3 орудине, 4 минометне, 5 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата минăсен складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра пирĕн танксен группи противникăн хирĕç тăмалли вырăнне атакăласа, 11 дзота, нимĕçсен пехотипе пĕрлех, çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн подразделени пĕр кун хушшинче противникăн икĕ контратакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсем çапăçу хирĕнче 100 виле ытла пăрахса хăварнă.

* * *

Оборона тытмалли питех те кирлĕ рубеж патне пыракан çул çине пирĕн боецсем минăсем хурса тухнă. Ирхине çул çинче нимĕçсен 8 танкĕ курăнса кайнă. Пĕр танкĕ мина çине пырса кĕрсе çĕмĕрĕлнĕ те чарăнса ларнă. Пытанса ларнă красноармеецсем нимĕçсен ытти танкĕсем çине гранатăсемпе çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарма тытăннă. Нимĕçсен 4 танкне вут хыпса илнĕ, вĕсен экипажĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Автоматчиксен старши сержант Орлов юлташ командир пулса ертсе пыракан группи çĕрле нимĕçсен икĕ блиндажĕ патне шăвăнса пынă та 20 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 2 пулеметне тата темиçе автоматне тытса илсе, пирĕн боецсем пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Украина партизанĕсен пысăк çитĕнĕвĕ çинчен хыпарсем илнĕ. Апрелĕн 27-мĕшĕнче партизансен С., К. тата В. юлташсем командир пулса ертсе пыракан отрячĕсем венгерсен 32-мĕш тата 46-мĕш пехотнăй полкĕсене пысăк сиен кÿнĕ. Çав полксене нимĕçсем партизанла движение пусарма янă пулнă. Тепĕр темиçе кунран партизансен çав отрячĕсемех гитлеровецсен пысăк карательнăй отрядне пĕтерсе тăкнă. Партизансем халăх пурăнакан темиçе пункта оккупантсенчен ирĕке кăларнă, противникăн 100 салтакне ытла тыткăна илнĕ тата 24 пулемет, 3 оруди, 5 миномет, 60 ещĕк мина, 138 винтовка, 600.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 30-мĕш пехотнăй дивизийĕн 6-мĕш полкĕнчи 11-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Арнольд Хейш çапла каласа панă: «Нумай мар вăхăт эпĕ Ригăра госпитальре выртрăм. Хулара лазаретсем питĕ нумай. Вĕсем пурте аманнисемпе тата тăм илсе шăсăлнисемпе тулса ларнă. Нумаях пулмасть эпĕ фронта таврăнтăм. Салтаксен шухăш-кăмăлĕ питех те пусăрăнчăк. Кирек мĕнле пулсан та пурте тăван çĕршыва хăвăртрах таврăнасшăн. Вырăссем нимĕç салтакĕсене тыткăна илмеççĕ текен юмах майĕпен сирĕлсе пырать. Анчах та тыткăна парăнма питĕ йывăр. Офицерсем салтаксене çивĕччĕн сăнаса тăраççĕ, кам та пулин малти линирен кăшт пăрăнса маларах кайсанах, офицерсем ун çине пулеметсенчен пеме тытăнаççĕ. Çавăн пекех ман çине те пенĕччĕ, анчах эпĕ вырăссен позицийĕсем патне ăнăçлăнах çитрĕм, кунта мана красноармеецсем питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç».

* * *

Гитлеровецсем хăйсем Лозовая хулинче пулнă чухне вĕлерсе тата çаратса пĕтернисем çинчен, ирĕксĕрлесе пусмăрланисемпе ишĕлтернисем çинчен пирĕн ятарласа уйăрнă комисси тĕплĕн акт çырнă. Актра çапла каланă: «Нимĕçсемпе румын вăрă-хурахĕсем мирлĕ гражданăнсемпе тыткăна лекнĕ красноармеецсене 876 çынна асаплантарса, персе тата çакса вĕлернĕ. Фашистла вандалсем хулари культура учрежденийĕсене—шкулсене, клубсене, библиотекăсене, больницăсене, парксене, театрсене, памятниксене, çавăн пекех пурăнмалли çуртйĕрсене те çаратса ишĕлтерсе пĕтернĕ. Лозовая хулинче хуçаланса пурăннă вăхăтра нимĕçсемпе румын вăрă-хурахĕсем тĕрлĕрен пурлăхсемпе паха япаласене 26.346.364 тенкĕлĕх çаратса, пĕтерсе тăкнă. Фашистла вăрă-хурахсем вырăнти халăхăнне çаратнă пурлăхăн хакне çак суммăна кĕртмен».

* * *

Германи халăхĕ Гитлерăн вăрă-хурахла шайкине тарăхни ытларах та ытларах çивĕчленсе пырать. Нумаях пулмасть Мюнхенра çар снаряжениĕ туса кăларакан пысăк завода сирпĕнтерсе янă. Çав заводăн тĕп цехĕсем нумайлăха стройран тухнă. Мюнхен хулинчи стенасемпе хÿмесем çинче час-часах: «Тĕп пултăр преступлениллĕ вăрçă!», «Сывă пултăр Совет Союзĕ!» тесе вăрçа хирĕç çырса хăварнă тĕл пула пуçланă.

Ĕçмелли шыва дезинфекцилемелли препарат

Коммунальнăй хуçалăхăн академийĕ ĕçмелли шыва дезинфекцилекен рецептура шухăшласа тупнă. Çав препаратпа усă курма та йывăр мар: шыва порошок яраççĕ те пăтратса ирĕлтереççĕ. 30 минутăран чи тасамар шыв та ĕçме юрăхлă, сиенсĕр шыв пулса тăрать. Сахал шыва — таблетка ярса тасатаççĕ. Литр шыва тасатма фляжкăна е бутылкăна пĕр таблетка ямалла. Шывне лăкаса чÿхентернипе таблетка шывра часах ирĕлет. 5—10 минута иртнĕ хыççăн шыв ĕçме юрăхлă, сиенсĕр япала пулса тăрать. (ТАСС).

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче

Совет хĕçпăшалĕ шанчăклă алăра

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 11-мĕш. (ТАСС спец. корреспонденчĕ). Авиапипе танк промышленноçĕсенче тата хура металлургинче малта пыракансем плантан иртерсе продукци туса кăларассишĕн ăмăрту организацилеме панă сĕнĕве Действующи Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хĕрӳллĕн кĕтсе илчĕç.

«Хĕрлĕ Çара çĕршыв паракан хĕçпăшал, — тесе çыраççĕ Песочкин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем ăмăртăва пуçарса яракансем патне çырнă хăйсен çырăвĕнче, — шанчăклă алла лекет. Эпир ăна нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре пĕрре çеç мар кăтартса патăмăр. Пире ытларах танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем парăр, ытларах снарядсем, патронсем, гранатăсем парăр, вара эсир хусамăра шеллемесĕр ĕçленĕ ĕçĕн тухăçлăхне часах куратăр! Ылханлă тăшмана çĕнтерни — сире парне пулĕ».

Фронтовиксем нимĕç çарĕн хĕçпăшаллăнчен малта тăракан хăйсен боевой хĕçпăшаллĕсене мухтаççĕ. Нумаях пулмасть Н-ски чаçăн гвардеецĕсем тăшманăн «çурхи резервĕсенчен» юсавлă темиçе танк тытса илнĕ. Вĕсене пирĕн хăвăрт çӳрекен тата паха маневрлă машинăсемпе танлаштарма çук. Халăх пуракан пунктсенчен пĕрншĕн çапăçнă чухне пирĕн 3 танк нимĕçсен 9 танкĕ контратакăна кĕнине сирсе пăрахнă, вĕсенчен иккĕшне çĕмĕрнĕ.

Н-ски авиачаçри летчиксем промышленноçра малта пыракансен сĕнĕвне хĕрӳллĕн сӳтсе-яваççĕ. Пĕтĕм Союзри ăмăртăва пуçаракансем патне янă çырура Н-ски чаçри летчиксем хăйсен материальнăй чаçĕсене лайăх вĕренсе алла илме, нимĕç оккупанчĕсене хаярăн çапа-çапа аркатма пулса хăйсем çине обязательство илеççĕ.

ПАРТИЗАНСЕМ ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРĔН ПРИКАЗĔ ÇИНЕ ОТВЕТЛЕÇÇĔ

Тăшманăн инçетри тылĕнчен, Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн линийĕ урлă, Ленинград облаçĕнчи партизансен çĕнĕ çĕнтерӳĕсем çинчен калакан хыпарсем çитеççĕ. Майăн 1-мĕш иртсен çĕрле партизансен С. юлташ ертсе пыракан отрячĕ Германи войскисен пĕр гарнизонĕ çине хăюллăн пырса тапăннă. Партизансем 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата чупункула сирпĕнтерсе янă.

Майăн 3-мĕшпе 4-мĕш хушшинче каçхине партизансен пĕрлешнĕ икĕ отрячĕ нимĕçсем лайăх çирĕплентерсе лартнă 4 пункт çине вăйлăн пыра-пыра çапнă. Вăл пунктсенче фронта пыракан нимĕç войскисем пин çын ытла пулнă.

Çапăçу 10 сехет çурă пынă. Çапăçура партизансем пысăк çĕнтерӳ тунă. Нимĕçсен 420 çын пĕтнĕ. Çак çапăçурах вĕсене 3 автоматлă тупнă, пулеметсен 18 точкине, горючи хунă склада, боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă тата çар хатĕрĕсем чылай тытса илнĕ. (ТАСС).

Тăшманăн 4 самолетне персе антарнă

КАНТАР ФРОНЧĔ, майăн 8-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн пилĕк истребитель фашистсен тăхă отройпа вĕçсе пыракан сакăр бомбардировщикĕ çине сиксе тăк пырса тапăннă. Вĕсем пурте «Юнкерс—88» йышши самолетсем пулнă. Çапăçура тăшманăнне умлăн-хыçлăн виçĕ машинине персе антарнă. Çак вăхăтра пирĕн Зайцевпа Удалов летчиксем «юнкерссене» пулăшма «мессершмиттсем» вĕçсе пынине асăрханă. Вĕсем «мессершмиттсен» атакине йышăнса, нимĕçсене хирĕç тухнă. Çапăçура Удалов самолечĕ сиенленнĕ, çакна пула вăл анса ларнă. Тăшман истребителĕсемпе çапăçма Зайцев пĕр пĕччеНех юлнă, вăл вĕсене сиенленнĕ совет машинине хыçран хăвалаçран та чарса тăнă. Маттур маневрсем туса, вăл нимĕçсен пĕр самолетне персе антарнă, ытти машинисем каялла вĕçсе кайнă. Çакăнти çапăçура пирĕн пилĕк истребитель нимĕçсенне 4 самолет пĕтерсе тăкнă.

В. МЕДВЕДЕВ.

Çуракине куллен, большевикла ертсе пымалла

Çуракине ертсе пыман çĕрте

ИШЛЕИ, майăн 12-мĕш. (Телефонпа). Сыпайкассинчи «Ыраш» колхоз председателĕ тырпула вăхăтра акса хăварма кирлине хăланса илесшĕн мар. Малта пыракан колхозсем çуракине вĕçлесе пыраççĕ, кунта халĕ те «çĕр чĕрĕ, акма халь иртерех-ха», тесе лăплански лараççĕ.

Çураки ĕçĕнче колхоз юлса пырать. Суртыррисем пурĕ 83 гектар акмалла пулсан, паянхи куна сухаласса та 17 гектар çеç сухаланă, 7 гектар кăна акнă. Çапла вара «Ыраш» колхозра «çĕр типессине кĕтеççĕ». Колхозăн сеялка пур, анчах сеялкăпа акма шутламаççĕ те. Акана хутшăнма пултаракан лашасем 18 пулсан, çуракине 8 лашапа çеç тухнă. Ыттисене ĕçе хутшăнтарман. Çавăн пекех ĕç вăйĕ енĕпе те. Колхозра кашни кун ĕçлеме пултаракан вăйпитти çынсем 40-рен ытла, анчах майăн 10-мĕшĕнче ĕçе 32 çын çеç тухнă; вĕсем пур ĕçе те бригадăпа кăна туса пыраççĕ, звеносемпе ĕçлессине хакламаççĕ. Çавăнпа суха тăвакансем хушшинче кулленхи нормăна тултарса ĕçлекенсем пачах та çук. Çуракинче пĕрлешсе апатланас ĕçе те организацилемен.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк, анчах вĕсене ĕçре ертсе пыракан çук. Колхоз руководителĕ Ефимов хăйне шанса панă ĕçе пысăк кăмăлпа туса пымасть. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă-ăнлантарулла ĕç пачах çук.

Колхозра комсомолăн пуçламĕш организацийĕ пур. Унта чылай çамрăксем тăраççĕ. Комсорг пулса П. Бычков юлташ ĕçлет, çав вăхăтрах вăл пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ те.

Анчах комсомолецсен вăйĕ çуракинче халь курăнмасть-ха, социализмлă ăмăртăва чĕртсе, колхозниксен массине ĕçре хавхалантарса пыни çук.

«Çĕр чĕрĕ» тесе акмасăр тăни халĕ преступлени туни пулать. Хăвăртрах акмалла, уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курмалла.

П. ЛУКИН, З. МИТРОФАНОВА.

Тухăçлă тырпулшăн фронтри пек кĕрешеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 12-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Мăн Улхашри «Красноармеец» колхоз районри чи пысăк колхозсенчен пĕри. Нумаях пулмасть колхоз членĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстерессипе çинчен» йышăннă постановленине сӳтсе-явнă. Постановление вуласа, кăçалхи çуракине пысăк çитĕнӳсемпе туса иртерме обязательствăсем илчĕç.

Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказпа хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене çирĕппĕн пурнăçласа пыраççĕ.

Колхозăн уйхирĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. Суха тăваççĕ, тырă акаççĕ, пахчаçимĕçсене лартма вырăнсем хатĕрлеççĕ. Колхозниксен халĕ ĕç сахал мар. Кашни колхозник хăйне шанса панă ĕçе пысăк пахалăхпа тата хăвăртрах тума тăрăшать. Вата-и вăл, çамрăк-и, уншăн ĕç пурĕ пĕрех халĕ чыслă. Г. Халманов колхозник вăрçă килсе тухман пулсан çамрăксем ĕçленине кăна пăхса çӳренĕ пулĕччĕ. Паян вăл та хĕрсех тырă акать, ĕçĕн нормине пăхса тăмасть.

— Çынсем фронтра çапăçаççĕ. Пирĕн кунта колхозра вăйлă тырпул туса илмелле вĕсене пулăшмалла. Манăн вăй пур-ха. Кирлĕ пулсан, алла пăшал тытса çапăçма та пултаратăп, — тет вăл. Çакăн пек кăмăлпа ĕçлеççĕ паян колхозниксем çуракинче.

П. Темяшев, Т. Гордеев, П. Клинов колхозниксем суха тăваççĕ. Ĕçе вĕсем тĕттĕмлех тухаççĕ, каçхине те тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ.

«Красноармеец» колхоз майăн 11-мĕш тĕлне 318 гектар ытла сухаланă, 278 гектар акнă. Çитес кунсенчех колхоз çуракин планне ăнăçлăн вĕçлет. Кăçал, çĕршыв вăрçă обстановкинче пурăннă çул, вĕсем вăрçă вăхăтне çивĕçлĕ пек тырпул туса илессишĕн «Лесной огонек» колхозпа ăмăртса ĕçлеççĕ.

Х. ЛИСИН.

Хĕрарăмсем пултаруллăн ĕçлеççĕ

ЕТĔРНЕ, майăн 11-мĕш. (Телефонпа). Кăçĕн Хăмаркари Максимова юлташ председатель пулса ĕçлекен «Родина» колхоз паян, районри колхозсенчен пуринчен малтан, тĕштырă культурисене акса çитерчĕ. Пултаруллă коммунистка Максимова юлташ Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене большевикла хастарлăхпа пурнăçа кĕртсе пырать.

Кăçалхи çураки каярах юлса килнĕ пирки колхозсен çуракинче уйрăмах пысăк тимлĕхпе ĕçлеме кирлине шута илсе, Максимова юлташ колхозăн пĕтĕм вăйне ĕçе тăратнă. Ялти комсомолецсемпе, колхозăн активĕпе çирĕп çыхăну тытса, вĕсем урлă колхозниксен пĕтĕм массине çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса иртерме мобилизациленĕ. Çуракине тухса колхозниксемпе колхозницăсем малтанхи кунсенчех хастарлăн ĕçлеме тытăннă. Уйрăмах комсомолка Андреева ертсе пыракан бригада лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Данилова, Игнатьева комсомолкăсем суха тунă çĕрте нормăна 140 процент тултарса ĕçлерĕç.

Çуракинче çамрăк колхозниксемпе пĕрле ватă колхозниксем те хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Тырă акнă çĕрте 70 çулти Толстов, 60 çулти Васильев колхозниксем ирхине 5 сехетре ĕçе тухса, каçхине 10 сехете çитиччĕнех ĕçлеççĕ. Ĕç нормине куллен 130 процент тултарса пыраççĕ.

Çавăн пекех çураки ĕçне «Красный Октябрь» колхоз членĕсем пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ. Колхозăн Охандерова юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригади уйрăмах лайăх ĕçлет. Бригадăн сухаçисем: И. Серебрянный, Анна Петрова, Надежда Петрова юлташсем нормăна 130-шар процент тултарса ĕçлеççĕ. Колхоз ĕнерхи куна 68 гектар тырă акнă, тепĕр 2—3 кунран тĕштырăсене акса пĕтерет.

Акана хутшăнман ытти колхозниксемпе колхозницăсем çĕрулми лартма хĕрсех хатĕрленеççĕ. Çĕрулми вăрлăхĕ яровизациленсе пынине сăнаççĕ. Вăрлăхлăх çĕрулми колхозăн çителĕклĕ, ытти колхозсене кивçен памалăх та пур.

Е. ПЕТРОВ.

Оборона гектарĕсем акрĕç

ШАХАСАН, майăн 11-мĕш. (Телефонпа). Çĕнĕ Мамири «Красный партизан» колхоз ĕнер пĕрчĕллĕ тырăсем тата пăрçа-ясмăк йышши культурăсем акса пĕтернĕ хыççăн, оборона фончĕ валли планран ирттерсе икĕ гектар акрĕ. Кăçалхи çуракинче колхозниксем, колхозницăсем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Суха тунă çĕрте — Б. Кириллов, А. Антонов, акнă çĕрте—Иванов, Герасимов колхозниксем ĕç нормине 150—170-шер процент тултарса ĕçлерĕç.

Ялсоветĕнчи Молотов, Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Активист» колхозсем те ыран-паян çуртыррисене акса пĕтереççĕ. Вĕсем оборона фончĕ валли 3-шер гектар сĕлĕ акса хăварчĕç. «Активист» колхозра комсомолец В. Иванов ертсе пыракан 3-мĕш бригада пĕрчĕллĕ культурăсене акса пĕтернĕ. Бригадăри стахановецсем Н. Михайлов, К. Иванов юлташсем кулленхи ĕç нормине 2 хут иртерсе тултарса пынă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). Укерчĕк çинче: Н-ски чаçри автоматчиксем халăх пурăнакан пункта йышăнаççĕ. Л. ДОРЕНСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Мускав хĕрарăмĕсем—Лондон хĕрарăмĕсене

Хаклă тусăмăрсем — Лондон хĕрарăмĕсем, сире эпир боевой салам яратпăр!

Истори пирĕн халăхсем умне питех те пысăк, анчах чыслă та хисеплĕ задача лартнă — мĕнпур этемлĕхĕн тискер тăшманĕнчен, гитлеризмран тĕнчене çăлса хăвармалла.

Совет Союзĕнчи геройла халăхсем вунă уйăх ĕнтĕ ирĕклĕхпе тĕрĕслĕхшĕн аслă вăрçă туса пыраççĕ.

Çав уйăхсем хушшинче Мускав хĕрарăмĕсем, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур хĕрарăмсем пекех, хăйсем хамăрăн тăван çĕршывăн тивĕçлĕ патриоткисем пулнине кăтартса пачĕç. Вĕсем фронтра та, тылра та, производствăра — станоксем умĕнче те, сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен отрядсенче те, оборона рубежĕсене тунă çĕрте те, лабораторисемпе институтсенче те геройла кĕрешеççĕ, геройла ĕçлеççĕ. Пур çĕрте те пирĕн ĕç пĕр ĕмĕте, пĕр тĕллеве пăхăннă — фашистла варварствăна пĕтерсе тăкмалла.

Хаклă аппасемпе йăмăксем!

Пирĕн çĕршывсем умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă кунсенче, вăрçă çулăмĕнче çуралчĕ пирĕн туслăх. Çав туслăх Мускава геройла хӳтĕленĕ кунсенче çирĕпленсе пычĕ. Вăл малалла та кунран-кун ытларах çирĕпленсе пырĕ, мĕншĕн тесен çав туслăхăн никĕсĕ пирĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пыракан пĕрлĕхлĕ кĕрешӳ пулса тăрать.

Хамăрăн вăйсене, хамăрăн пурнăçсене хĕрхенмесĕр ĕçлесе эпир хамăрăн пĕрлешӳллĕ вăйсене пĕр ĕмĕте пурнăçа кĕртнĕ çĕре ярăпăр: 1942 çула нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмĕшпех çапса аркатмалли çул, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсемшĕн çĕнтерӳ çулĕ туса хурăпăр.

Татăклă çапăçусен вăхăчĕ çитрĕ. Хаклă аппасемпе йăмăксем, çапăçăва! Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Англи авиацийĕн апрель уйăхĕнчи боевой ĕçĕсен итогĕсем

ЛОНДОН, майăн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин истребительнăй авиацийĕ противник территорийĕ çинче наступленилле операцисем апрель уйăхĕнче ун умĕнхи виçĕ уйăхринчен виçĕ хут ытларах туса иртернĕ. Вĕçсе пырса тапăннă вăхăтра противникăн 107 самолетне пĕтерсе тăкнă тата Германин нумай машинисене пĕтернĕ е сиенленĕ пулĕ тесе шутлаççĕ.

Апрель уйăхĕнче Англин истребителĕсем наступленилле аннă операцисем 67 хутчен туса иртернĕ, бомбардировщиксем континентăн тĕрлĕрен объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

«Дейли мейл» хаçатăн авиаци обозревателĕ, авторитетлă çын калланă тăрăх, Англи авиацийĕ апрелĕн 23-мĕшпе майăн 5-мĕш хушшинче тунă бомбардировкăсем хăйсен анлăшĕпе Англи çине Германи авиацийĕ вĕçсе пырса тапăннинчен 5 хут вăйлăрах пулнă, тесе пĕлтерет.

Япони хулисем çине бомбăсем пăрахни çинчен США çар министерстви пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 11-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви апрелĕн 18-мĕшĕнче Америка авиацийĕ Япони хулисем çине бомбăсем пăрахни çинчен коммюнике пичетлесе кăларнă (паллă ĕнтĕ, Япони хулисем çине Америка авиацийĕ бомбăсем пăрахни çинчен официально çирĕплетсе панине халиччен США-ра пичетлесе кăлармаи-ха). Япони хулисем çине кăнтăрла, уяр çанталăкра, питех те аялтан вĕçсе пырса тапăннă, самолетсен аэростатсем çумĕпе иртсе пымалла пулнă. Уйрăм объектсене питех те тĕрĕс шыраса тупса, вĕсем çине фугаснăй тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Токио, Иокогама, Нагоя тата ытти хуласем таврашĕнчи çар предприятийĕсене, суднăсем тăвакан тата ытти промышленность предприятисене атакăланă. Вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнине пула пысăк пушарсем тухнă, хăшпĕр çĕрте вĕсем икĕ кун хушши пынă.

Японири радио пĕлтернĕ тăрăх, бомбăсем пăрахнине пула 3—4 пин çын вилнĕ е аманнă.

Францири гитлерла террор

НЬЮ-ЙОРК, майăн 11-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 9-мĕшĕнче Францин оккупациленĕ пайĕнче гитлеровецсем Францин 50 патриотне асаплантарса вĕлернĕ, вĕсене майăн 2-мĕшĕнче нимĕç салтакĕ çине тапăннăшăн тесе вĕлернĕ. Çакăнпа пĕрлех гестапо татах 50 «залоржнике» тытса хупнă. Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, çав салтак çине тапăннăшăнах гитлеровецсем хăйсем арестленĕ 500 «залоржнике» «Хĕвелтухăç Европăри» концентрацилле лагерьсене ăраççĕ. Кунта иртнĕ эрнере Францире 150—200 çынна асаплантарса вĕлернĕ тесе шутлаççĕ. Вишири пĕлтернĕ сведенисем тăрăх, Парижра майăн 8-мĕшĕнче çĕнĕ «залоржниксене» нумай арестленĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ РАДИО ТĂРĂХ КАЛАНĂ СĂМАХ

ЛОНДОН, майăн 10-мĕш. (ТАСС). Англин премьер-министрĕ Черчилль радио тăрăх Англи халăхне чĕнсе сăмах каланă; çав сăмахра вăл нимĕçсем Совет Союзĕ çине тапăнни ăнăçлă пулман пирки Совет Союзне хирĕç отравляющи веществосемпе усă курма пултарни çинчен каланă. Гитлер çак çĕнĕ преступление тăвас пулсан, — тенĕ Черчилль, — Англия, хăй хĕвеланăçĕнче сывлăшра противникран нумай вăйлăрах пулнипе тата ытларах та ытларах вăйланса пынипе усă курса, Германин çар объекчĕсене хирĕç химилле вăрçа анлăн туса пырĕ. Германия Совет Союзне хирĕç отравляющи веществосемпе усă курнине Британи правительстви çав веществосемпе Великобританине хирĕç усă курнă пекех хаклĕ. Гитлер суйласа илтĕр: сывлăшри çапăçусен хăрушлăхĕсем çумне тата çак çĕнĕ хăрушлăха хушса хурасшăн-и вăл, е çук-и, — тенĕ Черчилль.

Черчилль тата çапла каланă: Англи халăхĕ, хăйĕн Советла союзникĕпе боевой юлташлăхпа çыхăнса тăракан-скер, çав юлташлăх ыйтакан нимĕнле жертва е асап умĕнче те чарăнса тăмĕ.

Малалла Черчилль Гитлерăн йăнăшĕ çинчен, Германири çамрăксемпе çитĕннĕ çынсене Совет Союзне хирĕç ярса йăнăшни çинчен каланă. Совет войскисем тăшмана хирĕç пĕр хăрамасăр тăчĕç, англичансем вĕсемпе тăванла юлташлăх турĕç те гитлеризма тата вăл туса хунине пурне те пĕтерсе тăкма сăмах пачĕç. Гитлер хĕл çинчен, хăйĕн начар тумланнă çарне хĕн кăтартнă хĕл çинчен манса тепĕр йăнăш турĕ. Хĕл çитсен совет войскисен паттăр контратакисем пуçланса кайрĕç. Совет Союзĕнче миçе миллион нимĕç пĕтнине никам та çирĕплетсе калама пултараймасть. Анчах вĕсем, кирек мĕнле пулсан та, иртнĕ вăрçăра тăватă çул та тăватă уйăх хушшинче пĕтнинчен ытларах пĕтнĕ. (Черчиллĕн сăмахĕ çумне хушса ăнлантарса панинче Рейтер агентстви çапла калать: Германин çар министерстви 1935 çулта пичетлесе кăларнă даннăйсем тăрăх, иртнĕ вăрçăра нимĕçсен 2.036.893 çыннине вĕлернĕ. Ку шута çапăçусенче вилнĕ салтаксемпе суранланса вилнĕ салтаксем кĕреççĕ).

Гитлер ăнсăртран, — тенĕ Черчилль, —çапла каласа хучĕ: пирĕн çар Совет Союзĕнчи иккĕмĕш хĕле лайăхрах хатĕрленсе кĕтсе илĕ, терĕ; Гитлер çапла вăрçă вăрăма тăсăлнине йышăнни нимĕçсене Совет Союзĕнчи сивĕ çилсем пекех сӳсентерчĕ. Паллах ĕнтĕ, совет çарĕсем халь пĕлтĕрхинчен вăйлăрах; паллах, вĕсем, йывăр опыта тӳссе иртерсе, нимĕçсене çапăçу хирĕнче çапма вĕренсе çитрĕç. Тата çакă та паллă: совет войскисем лайăх хĕçпăшаллăннă, вĕсен çирĕплĕхĕпе хастарлăхĕ пĕртте чакман.

Великобританипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем те Гитлерăн çулне пӳлсе тăраççĕ, — тенĕ Черчилль. Англи авиацийĕ ĕнтĕ ун çине тапăнать. Тĕнчери вăрçăн çак çулхи тĕп уйрăмлăхĕсенчен пĕри вăл — Англия тата, тен, Пĕрлешӳллĕ Штатсем те сывлăшра Германие хирĕç наступлени тăвасси пулса тăрать. Англия сывлăшра пуçпулса тăрасси ӳссе пынипе усă курма вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, — Германин шалти фронтне таттисыпписĕр тата вăйлăн пыра-пыра çапмалли вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Германи халăхне унăн пуçлăхĕсем мĕнтери тискеррине кăтартма вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, ăна Германин вăрçă валли ĕçлекен заводĕсемпе порчĕсене çав халăх куçĕ умĕнче çĕмĕрсе пырса кăтартас пулать. Англия Германи çине взрыв тăвакан япаласем Германия Англи çине пăрахма пултарнинчен нумай ытларах пăрахма пултарать. Ку пропорци вăл çулла, кĕркунне тата хĕлле малалла ӳсе пырĕ. Этемлĕх пуçĕ çине мĕнпур хăрушлăхсене йăвантарнă çынсем халь ĕнтĕ вăйлăн пыра-пыра çапнине хăйсем çинче тӳссе пĕлччĕр. Çапла майпа нимĕçсем хăйсем мĕн туни çинчен шухăшласа пăхма тата ӳкĕнме вăхăт тупĕç, хăйсем юр çине вилме хăваласа кăларнă миллионшар совет хĕрарăмĕсемпе ачисем çинчен аса илме, хресчен-семпе тыткăна лекнĕ çынсене массăллăн асаплантарса вĕлерни çинчен, Европăри чаплă халăхсене вĕсем хăйсем мĕн туни çинчен аса илме вăхăт тупĕç.

Черчилль çакна кăтартса панă: Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Совет Союзне танксем, самолетсем тата боеприпассем тăратас ĕçе туллин туса пынă, ăна Заполярьери штормсене, противникăн шыраса çӳрекен подводнăй лодкисене, самолечĕсене тата эсминецĕсене пăхмасăрах пурнăçласа пынă. Транспортсем тата вĕсене сыхласа пыракан карапсем пăртак пĕтнĕ пулин те, халиччен суднăсен караванĕсем хăйсем валли ăнăçлăн çул уçса пынă.

Совет Союзĕ чăтса иртерекен йывăрлăхсене çăмăллатас тĕлĕшпе Великобритания татах мĕн те пулсан тума пултарать-и, тесе ыйтса, Черчилль çапла каланă: нумай çынсем Европа континенчĕ çине çĕмĕрсе кĕрсе иккĕмĕш фронт туса хума ыйтаççĕ, тенĕ. Паллах, Англия мĕн тума шутланисене эпĕ уçса кăтартаймастăп, анчах англичансен нацийĕн çавăн пек вăрçăллă, наступленилле шухăш-кăмăлĕсене, Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çав тери халăлла-канскерсене, эпĕ ырлатăп, тенĕ Черчилль. Пирĕн хăюлăхпа ăслăлăх, — тенĕ вăл, — çав туйăмсемпе килĕшсе тăмалла.

Мадагаскар çинчи событисем çинчен Черчилль çапла каланă: çав утрава противник пырса илесрен асăрханас шутпа тумалли ĕçсене тумашкăн виçĕ уйăх каялла палăртса хунă, Диего-Суарес гаваньне йышăнса илнĕ экспедици Англирен икĕ уйăх ытла каялла тухса кайнă.

Юлашкинчен Черчилль çапла каланă: çак вăхăтран пуçласа японецсем тасрта çити сарăлса кайнă фронтсенче пуринче те хăйсене хирĕç вăйлăрах тăнине курĕç, Англипе Америкăн тинĕс çинчи хăвачĕ японецсене тытса чарасса, çав икĕ çĕршывăн сывлăшри хăвачĕ японецсенчен вăйлăрах пулни вăрçăри ытти операцисемпе пĕрле майлашса пырса Японие çĕнтересси патне илсе пырасса эпĕ шанатăп,—тенĕ Черчилль.

Германири халăх тарăхать, малашлăха шанми пулать

Геббельс „йăвашлăхшăн кампани“ пуçарать

СТОКГОЛЬМ, майăн 11-мĕш. (ТАСС). Геббельс Германире «йăвашлăхшăн кампани» пуçарнă. Ятарласа «конкурс» тăвасси çинчен пĕлтернĕ, унăн тĕллевĕ «лăпкă кăмăллă нимĕçсене 40 çын та пулин» тупасси пулать.

Çавна май, шведсен «Гетебергс хандельстиднинг» хаçачĕ: Геббельс Германире «йăвашлăх кампанине» пуçарчĕ, тесе çырать. Геббельс йăвашлăх çинчен кăшкăрма пуçлать пулсан, ăна валли вара пысăк сăлтавсемех пур. Виçĕ çул ĕнтĕ Германи вăрçă туса пырать. Российăри хĕллехи кампани нимĕçсен вăйне начарлатрĕ тата нервĕсене хавшатрĕ. «Фюрер» хĕвелтухăçĕнчи вăрçăн çĕнĕ хĕлĕ çитесси çине шантарса калани те хавасланатармасть. Çуклăхпа чухăнлăхăн вĕçĕ-хĕрри те курăнман чухне савăнăç сахал. Гитлер тухса калани нимĕçсене нимĕнле ырлăх та кĕттермест. Çавăнпа та Германи халăхĕн шухăш-кăмăлĕ пăсăлнă, кун çинчен Геббельс пуçарнă кампани те лайăхах калать. Халăх хăйĕн ытларахăшĕпе тарăхуллă та çилĕллĕ пулса тăчĕ, ку вăл нумая пĕлтерет».

Финляндин экономикăллă йывăрлăхĕсем питех те çивĕчленнĕ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 11-мĕш. (ТАСС). «Форейн коммерс уиклки» журнал çапла пĕлтерет: Финляндире 1940 çулти октябрĕн вĕçĕнчен пуçласа укçа йӳнелсе пыни куç умне тухса тăнă. Халăх хушшинче çӳрекен укçасен хисепĕ юлашки икĕ çул хушшинче 300 процент чухлĕ ӳснĕ. Журнал çырнă тăрăх, Финляндире иртнĕ çул тырпул 1940 çултинчен те — тырпул начар пулнă çултинчен те — начартарах пулнă. Уйрăмăнах çĕрулми вăйсăр пулнă.

Промышленность производстви Финляндире пĕрмаях чакса пырать. Тавар хакĕсем питех те ӳснипе пĕрлех, виççĕмĕш кварталта сутнă таварсен пĕтĕмĕшле хисепĕ чакнă. Çакă вăл потребительсене кирлĕ таварсем сахал панинчен, çавăн пекех вĕсем таварсене илесси чакнинчен килнĕ. Экспорт промышленноçĕн 1941 çулти III-мĕш кварталри продукцийĕ 1937 çулти çав вăхăтри продукцим тăваттăмĕш пайĕнчен те сахалтарах. Ютçĕршывсенчен кӳрсе килнĕ таварсен хакĕ 40 процент чухлĕ ӳснĕ. Унпа пĕрлех вĕсене кӳрсе килесси 2 хута яхăн чакнă. Кофе, çăм, тир тата ытти çавăн пек таварсене кӳрсе килме Финляндия пачах пултараймасть.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

В ЧЕБОКСАРСКОМ КИНОТЕАТРЕ

сегодня демонстрируется последний день новый звуковой художественный фильм ВОЛШЕБНОЕ ЗЕРНО.

14 и 15 мая демонстрируется звуковой художественный фильм ВЕСЕННИЙ ПОТОК.

В программе: киножурнал № 14 выпуска 1942 года.

Начало сеансов: 10, 12, 14, 16, 18, 20 и 22 часа.

Открыта предварительная продажа билетов.

Чебоксарской промартели „Металлист“ ТРЕБУЮТСЯ:

главный бухгалтер, техрук, мастер по литейному делу.

Адрес: гор. Чебоксары, Кировский поселок, Гражданская ул., 3. Телефон 5—45.

КУЙБЫШЕВСКИЙ инженерно-строительный институт имени А. И. Микояна

объявляет в 1942 году прием студентов на 1 курс и на свободные места старших курсов на факультеты: 1. Промышленного и гражданского строительства, 2. Санитарной техники. Отделения: 1. Отопления и вентиляции, 2. Водоснабжения и канализации. Срок обучения в институте — 3 года 4 месяца.

Условия приема общие для втузов СССР.

Прием заявлений с 1 мая 1942 года.

Иногородние обеспечиваются общежитием и столовой.

Справки об условиях приема по адресу: гор. Куйбышев (обл.), Самарская ул., д. № 61, тел. 8-80.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 6—85, издательство конторин — 6—23.

НТ 148 Гор. Чебоксары, типографии № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 [illegible]